…мĕш № Ийулĕшĕн Хакĕ 5 пус 7-мĕш çул тухать

# Капкăн




…енĕк йуппине тирнисене тĕп туса хурар! Пурте пикенсе çилос шăтăкĕсем пашнисем туса, вĕсене йĕркеллĕн тултарассишĕн кĕрешер!

# ПАЙАН

Сĕлĕ шерепийĕ куçа ылттăнăн курăнать, ĕмĕтлĕ шухăш пуçа хаваслăн ыталать.

Умра аслă уйхир. Йăрансăр та тем сарлакĕш... Ăçта вĕçĕ?.. Ăçта хĕрри!.. Хĕвел анĕç йенчен вĕçле çил вĕрсе, йăрансăр уй кĕреки çийĕпе хум хыççăн хум хăвалать.

Хăлаçланса шатăртатать çĕнĕ шнейккă. Шнейккăна кŭлнĕ лашисем хаçи, хаçи ĕрĕхсе кайасла талпăнаççĕ. Хăмăш хăмăллă сĕлĕ пĕр тикĕсĕн касăлса çыхакансен умне ыватăна, ыватăна йулать.

— Çикнал!.. терĕ Макçăм лашисене çарса...

Çавăнтах пĕр шурă тумланнăскер апат тийесе килнине курсан, пурте ĕçĕсене пăрахса тарпа хуралнă пит куçĕсене çуса шăлăнчĕç.

Шăрăх... Тŭпери хĕвел кахаллăн йулашки хĕвтине, пайан кун пăчăркаса типĕтем тенĕ пекех, пайăркисемпе хăлаçланса вĕтелет.

Шурă тумланнăскер ĕçлекенсен хушшинче кайăкла йăпăртатса çŭрет. Пăттине хатĕрлет, çăкăрне ваклать, ăна тăвать, кăна... Пĕр сăмахпа каласан— вăл колхоçнĕксен ĕç вăхăтĕнчи амăшĕ.

— Та... Пайан пĕр шнейккă пуçне 9 кектарне çавăрса çапатпăр,—терĕ Макçăм кулкаласа çăварĕнчи çăкăрне кавленĕ май.

— Тохта полттара трутотен илетĕри мĕн?.. ыйтрĕ прикатир текенни,

— Та... Вçĕ восмошнă.

— Пирĕн виççĕр кĕлте çыхмалла-иха?..

— Виççĕр ...

— Пайан икçĕр çыхнă еп. Касчен тата икçĕр ирĕккĕн... Шухăшласа илчĕ ыйтакан хĕрарăм.

— Ах, пĕлтĕр... Пĕлтĕрхине аса илсен,—терĕ Макçăм хăй ăшĕнче. Çавăнтах ăна „Кахал Куçман" хăтланчăкĕ тĕлĕнтерет. Вăл ытла та сĕвĕнкелесе кăна ĕселенкелечĕçĕске пур ĕçре те. Кăçал пăхха!.. Кутне вут хыпнă, тейĕ тепĕри курсан. Пур ĕçе те пуринчен малтан ĕлкĕртсе пырать. Ыйхине те канлĕ çывăраймаси, тен.

Вăлах вĕт утарнĕк.. Макçăмăн пуçне тĕрлĕрен шухăшсем ыталаса илесçĕ. Ыталаса илеççĕ те çŭç тумкатисене чĕтрентереççĕ. Йалан вăл пĕлтĕрхине аса илет. Ăна нимпе те манаймасть. Вара, йеплеха манăн. Карттинĕ пур те куç умĕнче.

Çапла пĕр ирхине хĕвел йаланхи пекех темиçе километтăрлă пайăркисене чалтăртаттарса, çĕрçине хĕлхем сапаланă. Макçăм арăмĕ, Майук, йашка хатĕрленĕ çĕртрен сасартăк çухăрашу сасса илтсе, кутник патне те чупса çитеймен, унăн ик ачи те урайне персе анса йун йухтарса тапăçлана пуçланă.

— Мĕскер есремечĕ!.. Ех, чарусăр муклашкасем! Ыйхисене те ыррăн çывраймаççĕске.

— Ласана памаста-а-а...—ыйхи тĕлĕшĕпе ĕсĕклесе илчĕ Васук сăмсинчен палкаса тухакан йунна çаннипе лутăркаласа.

Çав вăхăтрах Майукăн сĕтел çинчи турилкки персе анса, çиме ĕмĕтленнĕ ирхи апачĕ урайне сапаланнă.

— Прукчатăй кушакĕ!. Есĕ тата йашкана-и?:.. Çатмаври çĕкленĕ Майук кушак аçине çав тери çиленсе вирлĕн çапасшăн пулчĕ. Анчах калăпăр каллех, кушака телей. Ăна тивес çатмаври алăкра кĕрекен Макçăмăн мăкăр çамкинех пырса тирĕн Макçăм çавăнтах каскалла йăванса тŭнчĕ. Йун сăмсасем пушшех çухăра пуçларĕç.

—Епĕ сан айна пулма-и?..—Çивĕт тунинчен йавса антарчĕ Макçăм Майука.

— Тархашшăн ăнланха, ăнлан.

— Мĕн вара?!—Вăхăтсăр тилĕрсе кайнă Макçăм ачисем çине пăхса илчĕ.

Мĕнле мĕн иккенне Майук йĕрке пĕрĕн ăнлантарса парсан, Макçăм ахăлтатса йăрашшăнчĕ те анчах уйа выç хырăмпа кайассине аса илсен кулассине ырана хăвармалла пулчĕ.

Малалла Макçăмпа Майук çинчен сăмаха тек кунчаламасан та йурать пулĕ. Вĕсен мыскаринчен уйри колхоçнĕксем пĕç çапса кулни—кирлех те мар. Макçăмăн çатмаври хыççăн, хаçи-хаçи пиçес пăмтурла мăкăрălса тухнă çамки çинчен те чарăнса тăмăпăр.

Макçăмсене вăл кун уйри колхоçнĕксем кĕтĕте веçех супнă. Вара кăнтăрла умĕн аран-аран йăрăнкаласа çитнĕ. Мăйран уртăннă хутаç, алăри уйран ленкесĕ Макçăм тăлпŭне çĕрелле туртăнтарса пĕкĕ йевер авăнтарнă. Ун хыççăн Майук пĕр ачи пĕчĕк урапапа, тепĕрне алăра йăтса çитмĕл те çичĕ пăт çакнă тĕве йевĕр мекĕçленсе пынă.

Çавсене аса илсе тĕлĕрет пайан Макçăм Çавсене аса илсех вăл çамкине те хыпаласа пăхрĕ Анчах палли çук... Хачинчен пĕтнĕ ĕнтĕ вăл. Вăл пулса иртни пĕлтĕрех вĕт, пĕлтĕрех, Макçăмсен колхосĕ пуçланнă çулах.

Йаланах çанталăк та пĕр манер тăмастçкен Çавăн пекех пурнăç та улшăннаçемĕн улшăнса çĕнелнĕ май лайăхланса, çăмăлланса пырать.

Пайан Макçăмăн Васукĕсем те ыйхă тĕлĕшпе аташса сăмсисене катса пĕтермеççĕ. Пĕчĕк урапа



Çавсене аса илсе тĕлĕрет пайан Макçăм...

йе алăра йăтăнса хире пымаççĕ вĕсем... Вĕсем йаçлĕре... Вĕсем тĕрлĕ чечеклĕ сăрлă сĕтел хушинче теттесемпе выляççĕ. Хырăм тутă—çи пиçĕ Макçăм та, Майук та, кирлĕ мар.

Канăçлă Макçăмпа Майука та... Вĕсен ирхи апатне те пайан кушак аçи тапăнмасть. Вĕсен апачĕ хуçи—таса та, шурă тумланнăскер.

* * *

Çикнал иккĕмĕш хут çухăрсан, колхоçнĕксем капăрах тăрса харпăй ĕçне пуçăнчĕç.

Макçăмăн лашисем ĕрĕхсе кайас пек талпăнаççĕ. Хăлаçланать шнейккă... Хăлаçланнă май кăлтăртатса—„тăхăр кектар, тăхăр кектар,—полттара тенĕ йевĕрлех илтĕнсе чуна хавхалантарать.

Митта Петĕрĕ

# Ан ӳркен тасатма!

С. Шăпăк

— Кашнине хатĕрлĕр пĕрер алшăлли.
Пултăр вăл сирĕн тасаллăх палли.
Атту, йерет, теççĕ траххом.
Суккăрланнă, тет, çавăнтанах Пахом.
  Ан манăр манăк сăмаха,
  Тăрăр астуса.
  Ыр сăмаха астуни,
  Такамшăн та тем пахи.
Аставăр.
Ан манăр.
Çапла ĕнтĕ пирĕн хушу
Çаплах хушрĕ те пуху,—
  Тăнлантарçĕ Хĕветкене
  Комсомолĕс Хĕвилле.
— Есĕ ĕнтĕ ху пĕлен:
Епĕ мĕнле çыннине.
Мĕн каланă—çав пулаť,—
  Хĕветке ăшшăн йăпатаť.
— Çапли... çаплатаха вăл.
Пĕркун... итлемерĕ вĕт Павăл.
Малтан килĕшрĕ сан пекех:
«Пулаť, тет, алшăлли кашниннех»,
  Пыратпăр тепĕр виçĕ кунтан.
  Кăларçĕ вăт çилтăман:
«Курман, илтмен, пĕлместĕп,
Сирĕн сĕнĕве илместĕп.
Марш!
Кунтан марш!»—
  Хăваларĕ пӳртĕнçен
  Хапхи умне çитиçен.
Санпала та çавăн пек
Ан пулттăрçĕ иçмаса.
Малашнелле ĕнтĕ тек,
Пурăнасçĕ пит таса,—
  Ӳкĕтлерĕ Хĕвилле,
  Тухса утса килелле.
— Пĕрт ан кулçан, Хĕвилле.
Пулмĕ уншăн йĕмелле,—
  Алăк хупрĕ Хĕветке,
  Хĕвиллене илĕртсе,

* * *

— Мĕн хушнине тăвасах,—
Хĕветке арăмĕ хавасах:
Таçтан шуртан,
Те, тултан
Илсе кĕçĕ кăвак йĕм.
Тем,
Çылайççен шухăшларĕ,
Унтан касса вакларĕ:
Тăват татăк пĕр виçе
Тăват çынлă çемйине.
Çапла вара кашнине
Тиврĕ пĕрер алшăлли.
  Тул çутăлсан—ирхине
  Пурте тăрас харăсах.
  Пысăк хуран хĕррине
  Карталанас авăнсах.
Шывĕ тата «пит таса»
Енер улма çӳкенĕ.
Çав шывах та мухтаса
«Анçăк» йытта ĕçтернĕ.
  Çакă шывăн йулашки,
  Ыйтă ĕçнĕ çаплашки
  Ыйхăсенçен уçăлма,
  Харăс тăрса пит çума,
Куçа-пуçа тасатма,
Пите-сăна çутатма
Йурарĕ те пайан кун
Кирек йепле пултăр кун!
  — Алшăлли ăçта анне?—
  Ыйтрĕ Марине.
  — Курмани,есĕ, манăнне?—
  Тăн-н, пăхрĕ ~~Кулине~~. хриззаке
  — Тахăшин пулçĕ-пĕринне
  Сĕтĕреçĕ кушак каçхине.
  Те, сан пулçĕ вăл, Марине?
  Çавăнта, пăхха сакайне...
  Есĕ тата, ~~Кулине~~, хриззиме
  Тухса кĕрха тул йенне.
  Çавăнтаçĕ пĕр татăк,
  Иртнĕ ĕнтĕ пĕр талăк,—
Тăнлантарçĕ амăшĕ.
  — Епĕ те тупаймарăмха,
  Çимĕрха.
  Кам та пулин курмани?
  Анни?!—
Пăхрĕ арăмĕ çинелле
Йĕпе питлĕ Хĕветке.
  Кăмака çине хунăççĕ,
  Анçах, тăлла айне пулнăççĕ.
  Сирсе пăхха тăллине,
  Вăн, çав, хурине.—
Кăтартрĕ Анни
Курнине тунманни.

———

  Кашни кунхи кашни ир
  Çапла иртет ку килте.

———

— Сирĕн пӳрт тасах мар вара,
Çуни нумай пулаťи ара?—
  Йала пынă санитар-тухтăр ыйтрĕ
  пĕррехине
  Ирхине.
— Пĕлтĕр кăна çунăççĕ,
Кăçал та шут тытнăççĕ,—
  Çатăлтатрĕ Анни
  Тунманни.
— Ку мĕнле усал шыв?
— Пит çăватпăр ун çинçе!
— Алшăллисем?
— Пирĕн кашни ăрасна куратнă.
Вăн, кăмака тăррінçе,
Вут сыпписем айĕнçе.
— Супăçç?
— Мĕн? Супăçç? Супăçç-ç-ç-ç...
Курман ăна еппин...

———

— Хăвăр траххомлă. Аçăрсăне йертнĕ.
  Вăт, йепле ĕнкертнĕ?!
  Çестра сӳрет малашне сирĕн пата
  Сыватма.
  Ан ӳркен хута—тасатма!

# „ХĂТĂЛМАЛЛИ ÇУК“

Тĕрлĕ çынăн тĕрлĕ хушамат. Вĕсем пурте хутла пĕлекенсем пулсан, алă пуснă ђухне хăйсен хушаматне кăрнастай йĕрри пек йĕрлесе, йулашкине кушак хўри йеплe куккăр, çавăн пек кукăртса хураççĕ.

Хушаматсем урăх майлисем те пур. Ку хушаматсене хут çине çырмаççĕ. Сăмахран: Ђăпта Ваңукĕ, Сулахай Павăл. Шыçмак Микули тата ытти те. Илтни есĕр тата çакăн пек хушамат—Пиçен Йăван Кĕркури, тенине.

Вăл ĕлĕк ăнсăр хайар пулнă. Çавăнпа та ăна Пиçен Йăваң Кĕркури тесе ђĕннĕ. Хайарри вăл ђăнах хайар пулса çав. Йалта Сурпан татăкĕ çухалсанах кама та пулсан пуслăх айне хурса хĕстерсе пăхмасăр каçу тумасђĕ. Йе тата ун ани пуçне иртсе кайнă ђух çултан кăшт пăрăнса тыр хĕррине уруна перĕнтерсен, сана виç çухрăма хуса çитсе ĕнсе тымаррине çемçетсе йаратех. Выђăх йапала çаклансан хўресĕр хăвараŧ, йе картана хупса выçă какăртаŧ. Ни кăђух вара выђăхна илсе тухмалла пулсан ыр киреметрен те усал-йапăх шăммине сыхлarах тыт.

Атту таки хăйпăтмалипех хăйпăтса пăрахаŧ. Халђхи вăхăтра, çак колхос йĕрки пуçланса кайнăран вара, Кĕркури шатах улшăнђĕ. Виç çулхи ађаран та йăвашрах.

Пуху тăврашĕнђе мала тухса кăшкăрмасŧ. Колхос супрани тесен, кăмака çинђен те анмасŧ—ку йĕркерен вăл кашкăртан хăранă пекех хăраŧ. Ма колхоса кĕместĕн тесен, ман арăм итлемест, тет. Комсомолĕссем колхоса кĕрт тесе, Кĕркури арăмне килне кайса тăнлантарђĕç. Арĕмĕ килĕшме нулђĕ—Кĕркури килĕшмест. Айак ђиккине перет. Куккăрта колхоса кĕмен çынни те Кĕркури анђах. Ку тĕлĕшрен Кĕркури шĕлкĕше карĕ. Колхоса сисмесĕрех кĕрсе кайатпăрĕç, терĕ Кĕркури арăмне.

— Кĕрсен мĕн тата?-терĕ арăмĕ.

— Анттихрист ами. Ав вăл мĕн шутлаŧ,—çĕмĕрђĕ Кĕркури.

Арăмне ђут кăна тăлпаса пăрахмарĕ.

Тен, ђунсăрах туса хурађђи те, праçник, вырсарни кунах, килйышра харкашни питех хитре мар, терĕ авалхи ваттисен йăлине тытакан Кĕркури.

— Пĕçеленни йалĕ колхоссăр пурăнма пĕлмест. Çынсем кирек йеплe пулђăр, çак колхоса пурăпĕрĕх кĕместĕп,—терĕ ђĕлĕмне сак хĕррине шаккаса.

* * *

Кĕркури, Çĕпĕре куçнă, пурăнма.

— Кĕркури, тăр ђасрах,—кăшкăраŧ пĕре Кĕркури арĕмĕ.

— Хăрр! хăрр!—хăрлатаŧ Кĕркури.

— Ара Кĕркури тенĕ, ђасрах тухха каймалла

— Мĕн...

— Тухха, тетĕп, ђасрах.

— Лапра касси хыпса каймасŧ пуђçке.

— Ара халăх шалт пухура. Хунђкам пасăрах карĕ йалĕпех колхоса çырăнаççĕ, тет. А есĕ сысналла выр

— Кам сысна?

Унђен те пулмарĕ, Кĕркурин мăн çăпати пуç арăмĕн тутине пырса лап! турĕ.

— У-у-у!.. йĕрет Кĕркури арăмĕ.

Ăçти ĕмпўре вăл хĕрарăм арçына кăшкăрпур, тесе татах арăмне ђышкăпа пађĕ.

— Ара çĕре кĕмелле! Раççейа кайаси тата?

— Çĕпĕрти халăх та колхоса кĕрсе карĕ еппи

— Ей, пĕтрĕм, ниçта та **хăтăлмалли çук** 200 тенкĕçке пăрахрăм, 500 тенкĕ çул укçи. Ех вырăсăр тăкак! Куна пĕлнĕ пулсан, кăмака çинђен т анас çук мĕн,—терĕ те Кĕркури пухăва тухса утрĕ

**Сороккĕн.**

# ВĔРЕНЎ ÇУЛĔ ПУÇЛАНЂĔ

Канаш районĕнђе хăшпĕр шкул çурђĕсене тин çеç тума тытăннă.



**— Вĕренме тесе килтĕмĕр, шкул çуртне тин тума тытăннă... Туса пĕтериђђен кĕтсе ларас—хыр хыр тăрне хăпарса кайĕ...**

## Пахҫа-çимĕç валҫҫи катка пиҫке хатĕрлес хăвăртлăхсем




**Пирĕн Пахҫа-çимĕç сойусĕ ҫăн-ҫăн сойусах вăл, анҫах унта ĕçлекенсем—тимĕр шапа ăраттисем.**

**„Капкăн“** авкуст уйăхĕшĕн—15–16-мĕш №№— çитес кунсенҫех коллективисатсипе тырпул уйăхлăхĕ йаҫĕпе пиҫетленсе тухаť. Унта коллективисатсипе тырпул праçнĕкĕн веҫҫĕрĕсене иртерме йатарласа çырнă маттериалсем пулаççĕ. Çырăнса илме васкăр!

# ТАХҪАНАХ ҪАПЛА КИРЛĔЂЂĔ

Темшĕн ҫывăраймарĕ кĕҫĕр Тимĕркке. Тăма та питĕ ир тăђĕ. Ир тăнинђен, халиђђен хĕвел тухнине курманскер, питĕ тĕлĕнђĕ.

— Ойторох! Хĕвел вун, хăш тĕлтен тухаť мĕн. Халиђђен курманђђĕ. тесе анђах сарăлса тухакан хĕвел ҫине тĕллесе кăтартрĕ пўрнисемпе.

— Улатимĕр Куҫмиђ! На, пуштă илсе йулха.

— К ђорту! Тыха хўри айне пултăр пушту кађку! Кашнă кун ҫывăрма ирĕк памастăн, ҫўрен килсĕр йытă ами пек сĕтĕрĕнсе. Хурса хăвар ăҫта та пулсан!

Пуштăпа ҫўрекенĕ пуштине вутă шашанĕ хушшине хĕстерсе хăварђĕ.

— Мĕн ҫыраҫҫĕ пулмалла, камппани та камппани.

Колхос претҫетаттĕлĕ Тимĕркке урамалла, пирусне хыпса арман ҫунаттисем пек урлă урисене йенне-йенне пусса пынă ђух ҫил карр вĕҫтерсе тухрĕ ҫĕнĕ хаҫата.. Тимĕркке умне „Канаш“ саркаланса ўкрĕ

„Тыră-пулă пуҫтарас камппанине вăй хурса хатĕрленĕр“ тесе ҫăварĕнђи пируски тăрăшĕ саспаллисемпе ҫырнăскер курăнса кайрĕ ун куҫне.

— Тху! Тупнă ҫырмалли! Ĕлĕк епĕр никам каламасăрах иртернĕ. Халĕ кашни ҫавăн ҫинђен лапăртатаť. Мĕн хатĕрленмелли пур унта. Тух та выр. Вот ыран тухаттăр та выраттăр.

Тепĕр кунне кĕрлекен колхос пуххине Тимĕрккене те ђĕнсе пыђĕҫ.

— Мĕнле есĕ, Тимĕркке ним те шутламастăн, ыран тырă вырма тухмалла вĕт! — кăшкăрса тăкрĕҫ сасартăк.

— А мĕн шутламалли пур унта. Епĕ тахҫанах пĕлеп ыран тыр вырма каймаллине. Ир тăратпăр та кайатпăр.

— Машшинсем хатĕри?

— Тырă вырмалли машшин кам патĕнђеха пирĕн...

— Кĕлетки ман патра анкартишĕнђе лараť. рапisем урлатки, ҫулакан тимĕрри, кĕрепли ним те ҫук туђккă.

— Мĕнле ҫук? Ăҫта ђикрĕн?

— Есĕ, Макар, ан кăшкăркала. Ара вăл ҫулаканне есĕ илсе кайнăђђĕ вĕтха.

— Епĕ леҫсе патăм вĕт! Мĕн ес..

— Нет, паман.

— Ђимха, итлĕрха. Ман патăма кĕркунне шăллă пăђăкă пек вăрăм тимĕр йатса пырса пăрахрĕҫ. Ҫавă мари?

— Ҫавă! Ҫавă!

— Епĕ унтан татса ал пăђаки иккĕ турăм.

— Ҫавă! Ма турăн. Вретитĕл!

— Ара кам шуйттанĕ пĕлнĕ вăл кирлĕ тимĕрне.

— Урапи тата ăҫта, урапи?

— Урапине ман патран ҫак Тимĕркке пĕлтĕр илсе кайнă пек астăватăп, — кăшкăрђĕ Антун.

— Ан йаслаca тăр сăпса! Епĕ хăҫан сан патăнтан урапа илнĕ.

— Ђимăрха, шкул килхушшинђе пĕр урапа выртаť...

— Ҫавă! Ҫавă.

— Ҫавмар ҫав, есĕр хусамăр ҫавсем. Вăл шкулти уђђитлĕн хăйĕн, улма купаламаллин урапи.

— Кашти? Кашти ăҫта?

— Мишук арăмĕ татса кĕвенте тунă...

— Туртисем?

— Ҫимен уртмахи йађĕ.

— Кĕрепли?

— Кам шуйттан пĕлет.

Хытă карларĕ пуху. Тырă вырмалли машшин пайĕсене шыраса тăн тухрĕ.

Урамра мĕн куран ҫынтан? тырă вырмалли машшин урапине курман пулĕ, кĕреплине курман пулĕ“—ыйтаҫҫĕ.

Тĕл пулнисем хăшĕ кулса:

— Вăл кĕрепле сысна ҫăви варĕнђе выртађђĕ. Ҫавă сирĕн пулĕ терĕм теҫҫĕ. Хăшĕсем: паҫăр ађасем туртса анаталла кайрĕҫ. Ђуп, ҫитен теҫҫĕ

Никамран ытла Ваҫук тарăхмалла тăрăнтарђĕ. Вăл урапине курман пуђ тесе ыйтсан:

— Ман кутранах каҫхине айалти йĕм ҫухалнă, тата кайри шăл иккĕ ҫук. Есĕр курман пулĕ, терĕ.

Тарăхрĕҫ пурте. Тăн кайрĕ пурин те.

Пĕр Тимĕркке лăпкă. Вăл:

— Малтанласа таҫта та ҫапла пулнă, ҫапла пулаť, тесе лăплантараť.

— Ђимăрха! Ара авăн ҫапмалли те ҫавах пулĕ.

— Ҫавах?

— Урлатки ҫук, ђĕнĕсем ҫук....

— Ђĕнĕсенђен Михал тилхепе тунă!

— ?

Ку ĕҫпе колхоса кĕнисем ҫеҫ мар, колхоса кĕменнисем те тарăхнă. Нумайăшĕ.

— Мĕн хăйаматла хăтланаť вăл Тимĕркке, — тенĕ.

— Епĕр анђах кĕрес тетпĕр, вĕсем тем пăтранаҫҫĕ.

Ҫĕрле. Ĕҫ ҫинђи халăх лăпланнă, Колхоҫнĕксем те йулашкинђен тырра тăкас мар, машшина кĕтес пулмарĕ уш, тесе алăпа вырнăскерсем хытă ĕшенсе ҫывраҫҫĕ.

— Ҫĕр ҫăттăр вăл машшина тирпейлĕ тыта пĕлмен ҫынсене. Хура тăпра витĕнтĕр! Пулнинђен пулманни лайăх ун пек ҫынсем, — йантраса ҫывăрса кайрĕ Митрахван муђи те ывăннăскер.

Ҫав каҫах Тимĕрккене те пуйан Тимуш патĕнђен тытса кайнă. Вăл:

— Турăм-ха, турăм! Тĕпĕ йăхĕпе тăвап вăл колхоса! Ĕрђетмес! Малалла пĕр шит йамас. Халĕ 15 ҫын сайавлени панăђĕ колхоса кĕме, хăратрăм, пĕрне те илмерĕм, тенĕ кулакпа ыталанса.

Кусене колхоҫнĕксем сăнаса тытнă.

Ђăнах та пайĕсем пурте тенĕ пекех Тимĕркке патĕнђе выртнă. Вăл пытарнă. Тыр вырмалли машшин урапине тарантас урапи тунă.

— Тахҫанах ҫапла кирлĕђђĕ. Кулак пулăшкомĕсене, оппорттуниссене сывлама памасăр таптаса тăкмалла! — кăшкăрђĕҫ тепĕр кунне машшин ђарласа вырса пынă ђух.

— Ай—ай, пилĕк лаштах кайрĕ, уҫлам ҫăвĕ сĕрнĕ пек ҫемҫенђĕ—шутларĕ Митрахван муђи те ђĕлĕмне тиврестсе йарса.

— Вот халĕ епĕ те колхоса кĕреп,—терĕҫ машшин вырнине курма пынă ҫынсем.

Теприсем пĕрлештернĕ пурлăха тирпейлĕ тытма вĕренђĕҫ.

**Н. Ђурпай.**

# УТАРЛĂ ХАТĔРЛЕННИПЕ

I.

Вăхăт хыткан кĕсре майлă мар, ђисти йероплан кех вĕçет, тўрех каламалла—сотсиалисăмла ймсемпе ђупат̆ вăл вăхăт.

Сисмесĕрех ийунĕн 30-мĕш ђисли Ођти-касси лĕçтăвкомĕн кăнђелерне пырса кĕрнĕ. Çапла ваку ĕç ийунĕн 30-мĕшĕнђе пуçланнă.

Йалĕçтăвком претçетатĕлĕ шĕвĕртен те шĕвĕр рнипе сăмса шăтăкне тасатнă, çыруçи, пайан лнĕ хаçатсене—„хăшĕ çўхерех-ши?!“ тесе пăхкаса, ђĕлĕм туртасси çинђен шухăша йернĕ. Сартăк:

—„Ђăваш автономин уйавне вирлĕн хатĕрлер“—текен лосăнк унăн куçне шăтарас пек тĕлнĕ.

— Ей, претçетатĕл, пирĕн те праçнăка хитĕрлес пулат̆ вĕт!

— Питрав праçнĕкне-и?..

— Çук, ак хаçат çинђе çырнă—„Ђăваш автономин уйавне“—тет.

— А—аа... пулĕха, пирĕн пата вăл тĕлĕшпе хут манăçха,—тенĕ претçетатĕл.

— Е—е-шшă, пулĕ-ха... тенĕ çыруçи те.

II

1-мĕш ийуђ. Кăнђелерте претçетатĕлпе çыруçи çхи ђипер хĕрсем çинђен ăшшăн пупленĕ. Хуăран: „ха-ха-ха“—текелесе илкеленĕ.

Анђах вĕсем кăнтăрлахи хĕвел хăйсене кула-кух сыхласа тăнине сисмен.

Ђш-ш-ш, ĕçле хăвăн ĕçне...—сăмсаранах тĕртсе ђĕ претçетатĕл çыруçине.

— Мĕн?.

— Çын килет!..

— Мĕн ĕçлес ман хађ?

— Ç-ç-ç, ан шарла.

— Епир, хамăр йалтан пухăнса 45 çын Атăл ĕрне, патшалăха вађђи çўçе хуппи сĕвме кайатăр, хут туса парха?!—йерипен пĕлтерђĕ, хађ анах кĕрсе тăнă çамрăк ађа.

— Мĕнле хут? Çук, куратăн вĕт йерçместпĕр, раçнăк иртерме план тумалла.

— Претçетатĕл йулташ, еп сыснапа сурăх хуна кайса патăм, паллă туса йулăрха, ак квитантий,—йăлăнат̆ тепри.

— Çук йерçместĕп, праçнăк иртерме план тумалла.

— Трактăр актси укçине илсе йулăрха,—йăлăт̆ йал уполномођђăннăй.

— Йерçместпĕр, план тумалла.

— Нутăк мешшат̆ тăваççĕ ку халăх, пайан тăймарăмăр ку плана, ыран тăватпăр ĕнтĕ.

У-у, ăшшă ыран тăватпăр,—уйрăлђĕç пĕр-пĕинђен пуçлăхсем.

III

— Ну, уш ку планпалла, хăçан тăвас?.. Пайан мĕш ийуђ вĕт. Çав ĕнер виçĕмкун çынсем канĕрленĕ пиркийех тăвайморăмăр ĕнтĕ çав плана.

— Ара пăхха: пĕри пырат̆-те,—çакна туса панăн-ши?.. тет. Тепри—„куна туса парăрха,—тет, виççĕмĕш каллех ыйтат̆, ăçтан ĕçлен унта!

— Пайан ват̆, питĕретпĕр те никама та кĕртеспĕр, и план коттовă пулат̆.

— Ей, претçетатĕл, халăх пуху хăвалаттарасшăн—„улăх виçме йамалла“ теççĕ, тесе кантăк виттĕр шаккат̆ упполномођђăннăй.

— Çук йерçместпĕр, праçнăк иртермешкĕн план тумалла.

— Ну, шуйттан, каллех кансĕрлеççĕ, мĕн тăвас. .а?! .

— Претçетатĕл, пире хут туса парăр ĕнтĕ, хађ каймасан çўçе сĕткенĕ малалла типет вăл, вара прорыв пулат̆, пайанхипе уш тăваттă кун килтĕм—йăлăнат̆ кантăкран пĕри.

— Каланă вĕт сана—йерçместпĕр, план тусан кил.

— План пайан пулмарĕ, ну уш ыран тăватпăрах,—уйăрăлђĕç пĕр-пĕринђен пуçлăхсен туслă пуçĕсем.

IV

Ийулĕн 5-мĕш кунĕ. Пайан претçетатĕлпе çыруçи те ĕлекхи пек мар, ирех пыђĕç. Кăнтăрла çитесси те 5 минутђĕха.

— Çикреттар, мана утостворени çырса парха?

— Çук йерçместĕп, праçнĕк иртерме план тумалла.

— Претçетатĕл, пошалстă, тархасшăн пырса пăх-ха çав ман пата. Ĕне вилни тăвата кун иртрĕ ĕнтĕ, кашнă куллен килеп, çаплах „йерçместĕп“ тетĕн, çĕрсе кайат̆ вĕт вăл.

— Куратăн пуђ ĕнтĕ—йерçместĕп, сан ĕнў ман планран та хаклă штолĕ.

Претçетатĕлĕн пурне тепĕр ответ.

— Сирĕн сайом пури? Мана сайом кирлĕђђĕ те!..

— Акă сирĕн пата отношшени, отношшени!..

— Мана справкă пар-ха?..

Кăнтселерте халăх нумай, пурте темскер ыйтасшăн, каласшăн.

— Какковă ђорту есĕр кунта кĕрсе тулнă, сайомпа аппаланма кунта, илсе кай отношшенине кайалла. Пирĕн праçнăк вађђи план тумалла, тухса кайăр кунтан, ан кансĕрлĕр!..—çухăрат̆ претçетатĕл. Çăварĕнђен кăпăк тухат̆.

Кăнтселерте накам та çук. Шăп. Икĕ пуçлăх йумахлаççĕ çеç.—Пайан кансĕрлерĕç, план пулмарĕ — Ыран ир тăватăрха, саланђĕç пуçлăхсем.

V

Ку пайĕ ийулĕн 6-мĕшĕнђе пулнă.

— Претçетатĕл, пайан йалав çакас пулат̆—тет çекреттарĕ.

— Çакмасăр, ара, çакас пулат̆. Илсе тухса çакха, çавăнта кăмака хыçĕнђе пулмалла йалавĕ, пĕлтĕр хунăђђĕ те...

— Ах, шуйтан шăшийĕсем, йалава çурри таран çисе йанă.

— Айта, пойтот, тухса çак та, латнă!

Халăх пухăннă урам тулийех, митĕнк кĕç ак уçăлмалла.

Йулташсем!—тенĕ сасă сирпĕнђĕ таврана, кашнийех пуçран тĕртрĕ пулмалла. Итлеççĕ пурте...

— Çапла вара митĕнка уçăлнă шутлатпăр!

— Мĕнле митĕнк ара?..

— Пайан мĕн праçнăкĕ ара?..—нумайĕшĕ пĕлмеççĕ, ыйтасшăн тапаçлашаççĕ.

— Саламлă сăмах каламашкăн Петров сăма...

— Мĕн калаçан?!.—ĕнсинђенех тĕртрĕ Петров претçетатĕле.—Еп мĕн пĕлеп унта калама?..

# ШĂЛНЕ КАТАТ... ТĔП ПУЛАТ...



**Петтон та цемĕнт, цукун та хурçă-тимĕр**
**Çĕршывăмра акат хаљ „пилĕкçуллăх".**
**Кулакшăн вилĕм... кӳвет çак çĕнĕ ĕмĕр,**
**Ун йăвинцен тарат мĕнпур пек ырлăх.**
**Кулак хайар, ытла та тискер çиллĕ,**
**Хăй çиллипе шăлне вăл аварлат.**
**Анцах ку „пилĕк" шăлран та çирĕп ӳтлĕ,**
**çыртмассерен кулак шăлне катат.**
**Емĕрлĕхех ун йăхĕ тĕп пулат.** **АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ.**

Тавай вăт ху токлат туса пар!
— Сăмах претçетатĕле паратпăр...
— Ан калаç, ес, претçетатĕл, штоль мана хушма?
— Ма ес хатĕрленмен токлата?..
— Ан çухăр!...
— Сан ĕç мар.
Тухрĕ тавлашу преçитиумрах.
— Иулташсем,—терĕ вара претçетатĕл халăх саланнине курса,—ĕç нумай пулнă пирки праçнăка хатĕрленеймерĕмĕр, хусамăр та кансĕрлерĕр унта конешнă. Епĕ те виноват...
Праçникĕ те пулмарĕ, ĕçсем те çĕрцĕç вилĕ пуçлăхсем пирки. **И. Йалкан.**

# ПУÇĔПЕ ВĔÇĔ

Пухăнцĕç вуннăн. Тытăнцĕç ĕçе.
— Кирлĕ-и, уçатпăри?
— Кирлĕ!..
— Уçас!..
—Тăратăр алсене!
Тăратрĕç ларакансем.
— Пĕрре... виççĕ... тăххăр... вуннă... пурте!
Çакăн пек майсемпе уçрĕç Шупуçĕнце, Çĕрп районĕн хĕвеланăçĕнци кĕтесре ларакан йалта, 1928-мĕш çулта цăх-цĕп ертелĕ. Суйларĕç правлени: пуçлăхĕ —Мĕтри Петĕрĕ (унăн ашшĕ суйлав прави çухатнă), цленĕ—Мĕтри Петĕрĕ, çыруççи çавах.
Тытăнцĕç ĕçе. Малтанах цлен укçисем пухрĕç. Унтан устав йышăнцĕç. Кайран тата патшалăхран укçа илсе çăмарта пухма тытăнцĕç.
Пухаççĕ çăмарта, çиме тутлă йапала. Йалран йала цупаççĕ акĕнцĕсем. Тăрăшаççĕ кĕсем!..
— Çăмарта пар, инке, çăмарта!
— Мĕн хак паратăр-ха?
— Вăтăр икĕ пус паратпăр теçеткине!
— Ытти ертелсем 35 пус параççĕ-çке?
— Пирĕн йышăну пулнă... Кашнă теçеткĕрен виçĕ пусĕ ертеле çирĕплетме кайат...
— Апла еппин, тата... парас пуљ пĕр виç теçетке... укçа кирлĕ. Пасарне кайма инçе...
Пухăнат çăмарта. Кашни теçеткинцен виçĕ пусĕ ертеле çирĕплетме! Çапла майпах пухрĕç, ăсатрĕç. Пухрĕç—ăсатрĕç. Вунă пине йахăн пухса ăсатрĕç, „Çирĕпленет" ертел... Акă курăр вулакансем!
Çил арман хуçи Çтаппан Ваççук ывăлĕ авланат. Вăл тепĕр арман хуçи Илцук хĕрне илет. Петĕрĕн те ку туйран айакра йулас килмерĕ. Ара, йепле тăрса йулан, „ырă" çынсем вĕт! Çавăнпа та Петĕр хăйматлăх пулма шут тытрĕ. Шутларĕ те турĕ.
Сикрĕ туй Петĕр патĕнце те. Туй арĕмĕсене, ацисене Петĕр çăмартапа кӳптерцĕ. Вăт кунта вара „ертел çирĕпленцĕ." Тата унпа пĕрле 282 тенкĕ укçа шăвăнцĕ. Еçлерĕ Петĕр...
— Е-е! Петĕр пулсан пурнăпăр...
— Çăмарти те, маккаронĕ те... пурте пур-çке сан Петĕр,— савăнцĕç туй халăхсем.

* * *

Çитрĕ кĕркунне. Хресценсем уй-хир ĕçне пĕтерцĕç. Ертел те ĕçлет. Вăл çывăрмаст. Тепĕр пысăк ĕç турĕ вăл.
Шупашкар цăх-цĕп ферминцен 120 ăратлă цăх-цĕписене илсе пыцĕ. Ана хресценсм хушшине тепĕр çултан уншăн икĕ цăх илмелле салатрĕ. Илеç хресценсем анцах сахал.
— Ку цăххи, çап-çарах та, хĕлле шăнса вилет вăл... ман ăна усрамалли çурцĕ те çук....
— Вилмест, вилмест, ан хăра муци..
— А, слуцайнă вилсен?...
— Актă çыратпăр...
Салатса пĕтерцĕ Петĕр цăхăсене. Пысăк ĕç турĕ... Анцах цăххисене мĕнле усрасси çинцен пĕр сăмах та... Çавăнпа та ку ĕç, ĕç тунийех пулмарĕ. Хĕлле кĕрсен пĕрин ăратлă цăххи вилцĕ, теприн автанĕ... Актă çине актă çырцĕ Петĕр

Хăшĕсем кумăшсем пусса çирĕç те „вилнĕ“ терĕç. Уншăн та актă... Çапла майсемпе актăсем 60 штука çитрĕç. Йуралт капла пулҫĕ.

Ҫăхсене салатнă хыççăн çулталăк иртсен Шупашкартан хут пырат: пĕлтĕр салатнă ҫăхсемшĕн вĕтĕ ăратлă ҫăхсем пуçтарса патшалăха памалла. Кашни пĕр ҫăх йе автаншăн иккĕ илмелле... Кун хыççăн Петĕр шухăша кайрĕ. Вăл шутларĕ:

— Вилнĕ ҫăхсемшĕн актă тăратап... А, ҫĕррисемшĕн парас ҫăхăсем...

Шутларĕ те турĕ. Пыҫĕ фермăна.

— Çĕрсирĕм ҫăх... тата 60 актă!

Лешсем ҫĕнмерĕç.

— Полуҫҫай! — тыттарҫĕ актăсене Петĕр.

Илҫĕ фермă. Мĕн тăвăн, «массăвăй патеш»!..

— Ҫир пулнă унта сирĕн, ма пĕлтермерĕр?

— Вилиҫҫен пĕлмен епĕр...

* * *

Çăмартасем пухса панăшăн таварсем килҫĕç ертеле: супăҫ, çитсă, т. ыт. те. Салатрĕ вĕсене Петĕр. Хăйне те лайăх „снапшат“ турĕ. Тумланҫĕ, йакалҫĕ... Тасалҫĕ вăл. Унтан тытăнҫĕ калаçма Лисăпа (вăл хитре те, тумланнă вырăсла).

— Сан упăшку ĕçет... уйăрлмалла унтан...

— Уйăрлсан ăçта кайас ман?

— Хам пата ертел çекреттарне илĕп сана. Шалу парăпăр... кайран вытвишенипе фермăна ĕçлеме кĕрĕн...

— Аванҫĕ те...

Çавăрăнҫĕ çăмăл кĕске кăмăллă хĕрарăм. Тытăнҫĕç турĕç. Лисă Петĕр патне хăйĕн йапалисемпех ĕçлеме куçрĕ. Ĕçлерĕ пĕр-ик уйăх. Çав вăхăтрах йала сăмах сарăлҫĕ·

— Петĕр ик арăмпа пурăнат...

Текех сўтсе-йаваççĕ пĕр-пĕрин хушшинҫе çынсем.

— Килĕштерсех пурăнаççĕ-ши?

— Нумайах килĕштерсе пурăнакан марҫĕ-ха.. Ĕлĕк Тапук старик çавăн пек ик арăмпа пурăнҫĕ те, кайран пĕрне уйăрҫĕ çапах — теççĕ ватăрах çынсем.

Ҫăнах та, пĕр-ик уйăхран Лисă каллех ĕлĕкхи упăшки патнех пурăнма куçрĕ. Петĕрĕн тăкак туни ахалех пĕтрĕ. Аппаланҫĕ вара вăл çак хушăра темĕнле майлă та. Анҫах йал сисет.

— Ытла тумланса çўрет Петĕр, укçа ăçтан тупатши?..

— Çийессе те маккарон та çу-сĕт анҫах çийет.

— Ертел укçи—сахалли... Çăмарти те хăйĕн ампарĕнҫех!.. Пулăшкомра ҫухне те сахал çынна улталамарĕ...

— Ара, тата ҫăпта çаптарнă ҫухне манне 12 тенкĕ пĕтерҫĕ, шелмă.

Çапла хак паҫĕç ăна. Хăйайма рĕç ертеле те мухтама.

* * *

Сут Петĕр ĕçне пăхса тухнă хыççăн, вăл киревсĕр ĕçсем тунăшăн, икĕ çул хупса усрамалла, тата 300 тенкĕ йахăн шыраса илмелле турĕ.

Халĕ ĕнтĕ ертел ĕçĕ те сўннĕ. Çĕнĕрен ҫĕртмелле. Çапла „çирĕплетрĕç ертеле“...

**В. Çиçĕм.**

# ĔÇ КĔНЕКИСЕМ ÇУК



**Канаш районĕнҫи „Йауш“ колхосăн ĕç кунĕсене шутласа пырасси çакăнти карттин çинҫи пек пырат.**

# Йăстăш




*Нĕркеçри (Патĕрйел р—нĕ) „Пирĕн Йал“ хаçат йађĕпе усăлнă колхосăн хăшпĕр ђленĕсем ĕлĕк ђухăн пулнă, тесе сайома 2 тенкĕ çурăллăх ıа илесшĕн пулман. Çултаăкра хăйсен 230 кун ытла ĕçлесе ĕç кунĕ пуçтарăнат̆.*

Колхос ђленĕ Шăрка Микки кашни кун Ахпӳрт̆ ђиккинђи хурама патне тем тума кайса килет. Кайат̆ те таврăнат̆. Кайнă ђух вăл çавра çил пек васкаса ђĕвĕнет. Хирĕç пулакан унăн пиђĕ çинђе вунпĕр Тнепростройпа Урал—Куçнетскстройсене çирĕм тăватă сехет хушшинђе туса пĕтерме пройект тăвакан опĕриншенер шухăшне вулама пултарат̆: мĕнђул тарăн шухăш! Мĕнђул пултаруллăх вăйĕ!! Мĕнђул енерки!!! Хурама патĕнђен киле таврăннă ђухне вара, хирĕç пулакан çын Шăркана нийепле те Шăрка теме пултараймаст̆, мĕншĕн тесен, унăн пуçĕнђе тарăн шухăш вырăнне шăршлă пĕве шывĕ çинђи вакăра йавкаланса çӳрекен тислĕк муклашки пек çăмăл шухăшсем çеç; йĕпе ђăх хӳри пек усăнђăк, касса витми кутăн найанлăх ђирĕ кăна тăрса йулат̆. Унђухне вара Микка çине пăхсан, вăл вунпĕр Тнепростройпа Урал—Куçнетскстройсене 24 сехет хушшинђе туса пĕтерме пройект тăвакан иншенер пек мар, лăђăр-лађăр ут̆ур урапана тума та сакăр çул шухăшласа мел тупайман патуй пек кăна курăнат̆.

Мĕн тума кайат̆ вăл унта? Кайасса мĕншĕн паттăрăн, хăйпе пĕрле тĕнђе хĕнлĕхне парăнтаракан çĕнтерӳ вăйне йертсе кайат̆? Мĕншĕн вăл ун ђухне хăйĕн пултару енеркине ниçта шăнăçтараймасăр, кастарман ăйăр пек тулхăрса пырат̆?—ăна никам та пĕлмест. Анђах, хурама патĕнђен килне таврăннă ђухне ма вăл пиçмен кĕселленсе кайат̆? Ма унăн шăнăр тĕпĕсем ђĕгреççĕ? Шанђăк çутлăхĕ ма сӳнет ун куçĕнђе киле таврăннă ђух? Увы! Ăна та никам та пĕлмест, йалта пурăнан етем пĕр Шăрка Микки кашни кун çӳресе, куллен кунах муркка йытти пек пынине çеç сисет. Анђах, мĕн пирки типет вăл—ăна та пĕлекен çук.

* * *

— Ех, саккун!.. Пурнăç те вара! Çак нушана курма петнаттара тытса тăраççĕши ĕнтĕ? Ех, туђкă!—тарăхса йĕрет Микка арăмĕ кăмака умĕнђе. Пĕр тумлам куççулĕ таçтан йухса тухса, малтан сăмса айкки тăрăх çул туса анђĕ, унтан сăмса çунађĕ хĕррипе вăрттăн йухса пыђĕ те, сăмса вĕçнех пырса çакăнђĕ. Пĕр самант: „ӳкесши, çукши“— тесе куççуђ тумламĕ сăмса вĕçĕнђе ђĕтресе тăђĕ. Ђĕтрерĕ ђĕтрерĕ те кăмакаран туртса кăларнă çулă çатма çине тат̆алса анђĕ. Ун хыççăн сăмса вĕçне сăмса шывĕ тухса ларђĕ.

— Арăм, арăм теп!—нӳхрепрен кăшкăрнă пек илтĕнђĕ ђирлĕ выртакан Микка сасси.

— Мĕншĕн ђĕнетĕн ĕнтĕ каллех?!

— Кайса пăхха çавăнта тепре, çук-и унта мĕн те пулин.

— Каймастăп, каймастăп унта урăх, каймастăп! Унта кашни кун темиçе хутђен йарса есĕ мана та ђире йарасшăн... Каймастăп!

— Пайан миçе кайса килтĕн?

— Виççĕ.

— Ним те çуки?

— Хурамаран пуçне ним те çук.

— Хапрăк та çук-и?

— Хапрăк та çук.

— Савăт та çук-и?

— Савăт та çук.

—Ђукун çул та курăнмаст̆ и вара? Вçеђăвашки електростантси те çук-и?

— Ним те çук унта, ним те, ах сан тертне! Мĕн пултăр унта таса хирте?

— Çук еппин... Ултаlарĕç еппин вĕсем мана. Ех, ухмах, ухмах! Ман пек ухмах Веткă кĕпĕрнинђе те çук пуђ. Арăм, есĕ каç пуларахпа тепре кайса килха.

— Каймастăп, тенĕ сана. Пуссан та, кассан та каймастăп. Акă, хурама çине ларса...!

Микка лăпланђĕ. Анса ларнă куçĕпе мађђа çинђи кăвакарнă турата тĕллерĕ те, ăна пăхса ним щухăшсăр нумайђђен выртрĕ.

* * *

Нумай вăхăти, сахали—вăл пире питех интереслемест, анђах Шăркана усал йернĕ хыпар йал çине сарăлмаллипех сарăлђĕ. Йалти вĕçен ђĕлхеллĕ инкесемпе куммасем Микка усалĕ лупас хыçне вĕриçĕлен пек вутăн хĕмĕн йалтăртатса аннине те курнă тесе калат̆, тенине илтнĕ çемçе ђĕреллĕ асаннесем. Пăртак пурăнсан,—„Микка килĕнђен писнĕ, креском арманĕсен тăрринђе выртса çӳрет“,— теме тытăнђĕç. Айакрине витĕрех палăртайман Шăши Елукĕ те Микка колхос арманĕ тăрринђи çилхӳри йупи вĕçнех улăхса ларнине курнине каласа панă.

Сармантейĕн сарă ђăххи тунă сарă çăмартана усал шăши хӳрипе çапса çемĕрни пĕтĕм тĕнђене хускатнă пек, Шăрка та йала хускатрĕ, пулăшком вăкăрĕ мĕкĕрессипе типсе çуркаланса кайнă. Пăла çырминђе килес çул пулас шыв хумханасси çеç йулнă.

Тĕрлĕ çын тĕрлĕ сут тăват̆: Микканa виле тытнă та, çаврăнан пулă пуçĕпе асăннă ђух пулă пуçне хăй çисе йанă, çавăнпа пăсăлнă вăл, теççĕ пĕрисем; теприсем тата: „Хурамал ђиркӳне кайса кĕмĕл çутас вырăнне пăхăр кăна çутса, Микулай турра çиллентернипе пулнă“—теççĕ; виççĕмĕш верççи тата пĕтĕмпех урăхла калат̆, вăл: „вилĕ те тытман, Хурамал ђиркӳнђе пăхăр çутни те килĕшнĕ, вĕсен килĕнђе пăсташ пур, çавна тасатмалла,— тет. Ве Це Ес Пе ес ратиостантсиђен те нумай хыпар саракан Хысахви инке—Микка картишĕнђе тахçанранпа çурăлса вытакан пусă (çăл) такани хĕрйĕри йĕнине илтнĕ хыççăн кунта пăсташ пур тĕлĕшпе никам та сомневатсă тумарĕ.

— Пăсташ кунта, пăсташ. Пăсташ типĕтет ку Микканa,—т̆фу, т̆фу, т̆фу!—виç хут сурса, „хăйĕн пуçнех пултăр“ тесе ырă сунаççĕ Микканa йалти турă кинĕсем.

Микка арăмĕ йумăçран йумăçа çӳрет. Анђах йумăçĕсем пĕри теприн патне, тепри виççĕмĕш патне,

виççĕмĕшĕ каллех малтанхи патне йарса мĕскĕн арăма халтан йанă. Аптранă йенне Йанкассинђи пупсем патне кайса пăхаŧ. Микка маткине оттетсă Елексантр оттетсă Маркка патне йараŧ, оттетсă Маркка оттетсă Лаумĕ патне, оттетсă Лаумĕ оттетсă Арççук патне йараŧ, Арççукĕ—Елексантăр патне кайалла йараŧ, вĕçĕ хĕрри те çук. Кашнине пĕрер теçетке çăмарта парга тухрĕ, анђах Микка ăшĕнђи пăсташ вăйланса çеç пыраŧ.

Мен тăвас?

Патирекри (Шăмăршă р—нĕ)карт йумăçĕпе Кăвайри йумăç та ним пулăшу парайман пирки, таçти лекĕр патне пырса çапăннă. Лекĕрĕ килнĕ те, Шăрка ăшĕнђи усалпа калаçма тытăнаŧ:

— Ну мĕн çине шалăвăтсă тăватăн ђирлĕ çын?—ыйтаŧ лекĕр.

— Сайом çине,—тет усал Шăрка ђĕлхипе.

— Хăш тĕлтен ыратаŧ?

— Кăсйерен, пăртманекрен,—тет усал.

Тухтăр пуçне çавăнтах шухăш пырса кĕђĕ: „кăна сайом ытла нумай илнĕрен укçине хĕрхеннĕ пирки ăсĕ пăсăлнăи кунăн?“—тесе илђĕ.

— Нумай илтĕне апла ес сайома?—ыйтаŧ тухтăр.

— Нумай, çав тери нумай. Ах нумай та!..

— Ма апла пит нумай илтĕн?

— Мана активиссем улталарĕç: хапрăк, савăт, ђукунçулсем, електростантсисем, мелиоратсилетпĕр, уйхире химисатсилетпĕр терĕç те илтĕм.

— Тăваймарĕç пуђ тетне вара.

— Каккуй тума унта. Унта ним те çук. Кашни кун темиçе кайса пăхрăм, арăма та йатăм, пурпĕрех ним те çук. Хурама хурамах лараŧ.

— Кунта туман пулсан урăх çĕрте тăваççĕ ăна.

Ав Нăрваш Шăхалĕ патĕнђех çĕр тĕпĕнђе темтепĕр какла йапала тупнă, хамăр республĕкрех тем пыăкĕш савăтсем лартаççĕ, унта та кунта тĕнђере çук ђаплă пысăк хапрăк-савăтсем, хуласем, ђукун çулсем тăваççĕ. Санăн укçу çавăнта кайнă ĕнтĕ.

— Çук, çук!.. Ĕненместĕп, ĕненместĕп еп ун пек ăмаха. Пирĕн йалти активиссем те ăна çаплах суйаççĕ. Есĕ те, вĕсем те, пурсăр та суйатăр... Ах укçам! Мĕнђул укçа тăкăнђĕ, пĕтрĕ, çĕрђĕ мĕн ђул укçа!.. Тавай!.. Тавай!.. Тавай, теп укçана, ўх-ўх-хўх-хўх-хўх-хў-ў-ў!..—йĕрсе йађĕ Микка.

— Ан йĕрха! Есĕ кунђул сайома сотсиалисăмлă ăмăртăва хутшăнса илмен-и?

— Çук, çук. Епĕ унпек кунпек çын мар. Ĕпĕ хам ăспа пурăнакан çын. Мĕне кирлĕ мана ăмăрту? Славпух, хаљ пурнатпăр: колхос лашаран та, ĕнерен те, тырăран та, ыттинђен те антратмасŧ. Кăçал ак çĕрçирĕм, çĕраллă пăт тырă ĕçлесе илеп, тата мĕне кирлĕ мана сотсиалисăмпа унăн ăмăртăвĕ. Сайом илсе те ухмахлантăм. Ман пек ухмах Пенсăра та çук пуђ.

— Апла еппин.

— Çапла çав. Çайом илме мĕн, пирс Совет влаçĕ мĕн панă?

— Налок мĕн ђухлĕ тўллетĕн есĕ?—ыйтаŧ тухтăр.

— Микулай вăхăтĕнђе налук тўллейменшĕн ĕнене тытса кайса, хама страшник ђўпĕклесе хăварнăранпа налокне мĕнне тўллемен, мĕншĕн тесен славпух, колхоса кĕриђђен епĕ петнаттара тăнă. Колхосра ĕçлесе илнĕ укçана сайом илсе пĕтерме слопотă панă-им вара пире?

Тухтăр кăна хирĕç сăмах калас вырăнне çамкине картлантарђĕ те Шăрка пуђене хыпашлама пăрахрĕ.

— Выçлăх çулсенђе илкеленĕ ĕнтĕ. Утмăл пăта çиткеленĕђђĕ-и çав? Ăна та мăнахвис тухиђђен ыйтса тĕкене илђĕç... Кайран кăçарђĕç, мĕншĕн тĕсен епĕ петнатта вĕт,—тет Микка.

— Куђантăн апла сайом илнĕшĕн?

— Куђанмасăр. Есĕ ху илха унђул—тухтăр пуçупа ухмаха тухăн...

——

Çулмай тухтăр колхос кăнђелерне кĕрсе сайом илнĕ ђленсен çписсăкне пăхса тухнă, унта:

„... 67) Шăрка Микки 2 р 50 копейккăллăх“—тесе çырнине вуланă.

**Етмен А.**

---

*Вал. Ахтупай*

# Куллен ура шăлса камаха усă патăр?..

ăваŧ ђул троттуар.
ухаŧ васкав урам.
рам хĕрри çуртсен
ермашăвĕ ђул-кирпĕђ.
рам васкавĕпе
çрен утса пырап,
нсăртранах пуçа
ĕр ђăнлăх шухăш килђĕ.

ухаŧ, васкаŧ ĕçпе
анусăр шухăљ халăх.
авлан урам ђуна
итрелĕхпе караŧ.
мсантараŧ мана
вас тĕнђе—пахалăх,
вах ман шухăшăм
ухмасŧ пуш çамкаран.

аскавлă халăхăн
ашнин васкав ĕçсем.
уллен ывнатăн та
аттăр, сатра кан...
çĕллă халăхăн
ре кăна вĕçсе.
ах ман асăмра
ра тасатакан.

Хулан мĕн ђул урам,
Мĕнђул урам йулпи,
Кашни кĕтессенђех
Ларaççĕ шаккаса.

Куратăп пурте çамрăк,
Ђеђенлĕхпе хавас,
Кашни куллен шыраŧ тен
Пулас кунçул туппи.

Ђăштик... ђăштик... шăлаŧ,
Çынни хăŧ пултăр такшĕн,
Пушмакĕсем ун пулђђăр
Темлех хăŧ варанђăк.
Çапла вăл, çамрăк ђух
Ие кривĕнник,
Петтакшăн
Епир ђас-ђас пулатпăр
Хўрасĕр выçă анђăк.

Куратăп, ђыслă çын
Лартаŧ хăй урине
Вăнпиллĕк пус сунаŧ,
Çулла ăна, тасат..
Ђăках, «выçса килсен
Укçашăн ђул касан».

Вăт, çавăнпах хăшђух
Çуралан çын хурине.

Анђах, ку ĕç пайан
Памасŧ çул туппине.
Ку ĕç (елле туймастăр?)—
Аваллăхăн йулашĕ.
Ку ĕç çинђе парни—
Пайанлăхăн тупашĕ,
Çак ирĕк çĕршыва та
Ђуралăх вăл пиллет.

Пĕлетĕп, леш йенђе
Нуша пире çийет.
Унта ак çамрăклах
Пуйанлăх ђăмăртаŧ.
Каçарăрха мана,
Кунта вĕт СăСăйеР,
Суйлав парави пулсан
Кунта пурте пĕр тан.

Сисетĕп, теприсем
Мĕскер пуплетĕн, тейĕç.
Мĕскер ес, Ахтупай,
Кавлетĕн тек, пустуй?..

Çĕршывăм ман ĕçсе.
Ман парттин мăн итейă.
Туймастăр-и çавах
Станок тăваŧ простой?!.

Илтмастĕр-и уйхир,
Илтместĕр-и мĕн савăт
Куллен мĕкреççĕ сас:
Тавăйăр пире çавăт!
Куллен мĕкреççĕ сас:
Тавайăр пире катăр!

Анђах, пĕлесђĕ ман,
Есир ура шăлса
Çак еçпĕ çĕршыва
Мĕнлех-ха усă патăр?

Шăваŧ ђул троттуар.
Йухаŧ васкав урам.
Урам хĕрри çуртсен
Кермашăвĕ ђул-кирпĕђ.
Урам васкавĕпех
Еп те утса пырап.
Ăнсăртранах пуçа
Çак ђăнлăх шухăш килђĕ.

# „ÇТИМУЛСЕМ“

— Етемрен те пур, выђăхран та пулат̆... Есĕ мĕн тăвас тетĕн ăна?.. Вăл çапла тумалли йапала тăк, унăн хăйĕннех саккун,—терĕ пĕрре Çитăркка алинђи туйине ток ђиксе лартса.

— Е-е, калаçат̆ çак Çитăркка муђи,—терĕ Йăванкка.

— Çўçĕ-пуçă кăвакарађђен пурăннă, çав ђăхăмçă выђăха тыткалама вĕренеймен... Парха хама, парха епĕ уна тыткалам!

— Тем, рас ђăхăмçă тăк, уш ăна хăт̆ тем хăйамађĕ ту та, вăл хăй йăлине пăрахмаст̆. Тыткаламан мар, пушă (ђăпăркка) вĕçне тимĕр пăтаран авса тĕвĕсем туса та ăшалантарса пăхрăм та, усалăн хăйĕннех йăли. Çапатăн—сикет, тапат̆, тавраша ватат̆, малалла каймаст̆,—тет Çитăркка.

— Пушă (ђăпăркка) тепĕр лашана вăл йĕкĕлтени анђах. Ĕлĕкрен кахалланса тапăçса вăрçма вĕреннĕ выђăха тыткалама стайне пĕлес пулат̆,—терĕ те Йăванкка Çытăркка умне пырса тăђĕ.

— Итле, епĕ сана каласа кăтартам!—терĕ.

— Вот снађђăт, карăмăр вырăса.. Çитрĕмĕр пĕр йала, пиђђепе иккĕн илтĕмĕр пĕрер çуна утă. Тийерĕмĕр как пăлакатсă, патăмăр вырăса укçа, тухрăмăр киле. Каç пулттипе çитрĕмĕр Сăр улăхне,—терĕ те Йăванкка сăмсине шăнкартса пуçне хыçса илђĕ.

— Ну вот... Сăр урлă каçсан, вăсмăкăн сăрт çинелле хăпарнă ђух, манăн пиђђен лаши вăрçма, ђăкăмлама пуçларĕ. Турткалат̆, çапах—лаша турт-маст̆; умне пырса шăлкалат̆, ађашлат̆, ĕнерђĕкне мĕнне йусакаласа туртса пулăшат̆—лаша калла ђакат̆. Пиђђе çине пăхса тăрса хам та тарăхса кайрăм. Ну, терĕм, пар мана лашуна! терĕм те тилхепине йарса илтĕм; салакайăк пуçĕпек ăвва тивертсе хўри айне ђиксе лартрăм. Как ђиксе лартрăм, лаша пĕррех курăнђĕ... Çил пек ђашкăрса хăпарса кайрĕ. Хўрине арман çунатти пек пĕтĕрсе правус пек силлесе пырат̆ çунана. Лаша вăл што, лашана ђĕрре вĕрентме пулат̆,—терĕ Йăванкка.— Ак, ђăхăмçă йе кахал етемме мĕлле ђĕрре вĕрентмеллине пĕлейместĕп. Илтнĕ-и есĕр? Хĕрлĕђутай копсойусне çавăн пек кахалсем ђăхăмçă етемсем кĕрсе ларнă та хаљ мĕн хăтланаççĕ?

— Пăрахăр-ха!.. ђăхăмçăсем, копсойусри кахалсем çинђен калаçма... Ат̆ăр палумми сутма!.. Кайăпăр Йетĕрнене, Кăрмăша, Вылла. Çĕртсе сайа йарађђен кăшт та пулин сутар. Сатри улмасем тăкăнма пуçларĕç.

— Пуçларĕç анђах мар, çурри ытла тăкăнса пĕтрĕç, çĕрђĕç. Кайса пăхха—иртерех пулакан улмасем йăлтах пĕтнĕ,—терĕ Çитăркка.—Пĕтерђĕ ку копсойус... пин, икĕ пин тенкĕллĕх сата 50 тенкĕ censored

— Вăл анђах-и?.. Копсойус 15000 тенкĕ салатнă, районри сатсене илсе тăкнă та хаљ улмине ниçта та йараймаст̆. Пĕлекенсем каланă тăрăх, пĕр миллйун çурăллăх улмаран çентапĕрĕн 1-мĕш тĕлне 210 коропкă йанă.

— Ма апла тăваççĕ?.. Те ђăн, те суйа, панулми илме кăларса йанă акăнђĕсем йалсенђе куç курми ĕссĕр çўреççĕ тет, терĕ Çитăркка

— Ђово уш суйа?.. Урă пуçлă çынсемех ăçтан çавăн пек туђђăр ара? Хĕрлĕђутайри райсойус хăйĕн столовинђе панулми сутма пуçласан копсойус райсойуса ђут сута паман... Столовинђе сутма ђарнă,—тет Йăванкка.

— Ђăн-и вăл?.. Апла тăки, ђăнах копсойус йађĕпе пире улталаççĕ... Килђĕç ман пата копсойусран, сат илеççĕ...

— Шутлатăп, ман пĕр 300 пăт лайăхах пуçтарăнмалла... Пасар хакĕ парăр... Йаптăхраххи 1 тенкĕ, лайăххи, анис 2 тенкĕ, тетĕп.

— Хе, теççĕ... Есĕ старик илме пĕлместĕн... Йаптăххине 2т 40 пус, лайăхраххи ытларах, ђи лайăх суртне 5 тенкĕрен те маларах паратпăр... Сан кун та 1500 тенкĕллĕх таса тупăш, терĕç... 50 тенкĕ censored

— Тăрăхлаттăр, ма ун ђул? тетĕп.

— Çапла-çапла, сатсем ытларах ĕрђетме çтимул сире терĕç... Лайăх астăватăп„ çтимул“ терĕç. Пайан кун та шутлатăп, çеклеттар патне те„ çтимул“ мĕнне кайсах итрĕм.—Кам пĕлет „Çтимул“ мĕне? Асăрхаса пурăн, килсен хăйсенђен итсе пĕл, терĕ çеклеттар.

— Килсенех итетĕп таха... Ваңкка кĕнеки çинех çырса хуђĕ... Уђитлĕрен итсе пĕлетĕп, терĕ.

— Лайăх турĕç„ Çтимул“... Копсойус кăçал тарă йантлама панă 3000 тенкĕрен çуррине ытла калла йанă, тарă йантламан, пăта илмен, сатсене хăй илнĕ пек туса, хысна укçине 15000 тенкĕ салатнă. Пурĕ хаљ 210 коропкă йанă та йулашкисем çĕреççĕ.

—Çапла-и хаљ Çтимул?..Ăçта вĕсене ваљђи пушă?..

— Пушă мар, пушăпах ăçтан каçаран вĕсене?.. Ăçта çĕрмест, камăн çĕрмест?.. Колхоссен пĕр 800000 тенкĕллĕх, колхос маррисен тепĕр çавăн ђул панулми копсойус пирки çĕрет!.. Лайăхрах „çтимулламалла“ копсойусри кахалсене.

**Калай.**

## Пĕђђен, хуçи камне маннă çурт.

Шупашкарти хĕрлĕ плошђăтре строиттĕлсен сойусĕ „хура касса“ туса лартнă. Анђах вăл йатне кăна ларат̆. Унпа усă курасси çинђен никам та шухăшламаст̆.



**Касса** (путкă): „хура касса“ пултăр тесе турĕç те мана, „хура касса“ пулаймарăм, строиттĕлсен сойусĕ йапăхлăхне кăтартакан „памăтнĕк“ çеç пултăм.

# ТĔНҪЕ ПĔТНИ

Карӑнҫӗ йал ҫине тӗттӗм каҫ—шӑши курнӑ кушак пек—лӑпҫӑнса, сыхланса, тем кӗтсе...

Алексейӗвнӑ йалӗ ҫинҫе (Аксу районӗ, Тутар респ.) виҫӗ тӗлте йалтракан хӑй ҫутӑ тупӑк ҫинҫи вӗҫ ҫурта пек хурланса, иментерсе ҫутатат. Тупӑкри пек тӑнӑҫ. Пӗр йумӑҫ патӗнҫен таврӑнакан Типери Илйи ҫеҫ ҫав тӑнӑҫа хускатса тӑвӑр тӑкӑрлӑксем тӑрӑх Масар касси йенне пӑрӑнҫӗ. Йавӑр шухӑш, кушак ҫӗрни пек, ун ҫӗрине ҫӗрсе типшӗм урисене хӑвӑрт пустарҫӗ.

—Пӗтет кӗҫӗр тӗнҫе... Уҫӑлат тамӑк хапхи... Ӳкӗнӗр!..—каймаст пуҫран йумӑҫ каланӑ сӑмах.

—Кӗҫӗр... Кӗҫӗрех...—Ҫӗлӗкне хӑлхи ҫине пусса лартса хыпаланат Илйе; ҫавӑрӑнса пӑхсанах вилӗм курассӑн туйӑнат;—Ах ҫитесҫӗ киле... пӗтиҫҫен.

Киле ҫитнӗ ҫӗре ҫӗрӗ тата тӗттӗмленҫӗ, хыҫра инҫе мар карӑш виҫҫӗ авӑтрӗ, таҫта хӗсӗннӗ ҫил ҫури хайаррӑн ҫӗнсе ҫухӑрҫӗ· Илйене те, тахшин питӗнҫен сӗртӗнҫӗ:—те ҫил, те есрел ҫунаҫӗ, те пирӗштисен курӑнми ҫарӗ.

„Хӑрушӑн иккен тӗнҫе пӗтнӗ ҫухне".

Пӳрте кӗрсен, арӑмӗ харӑлтатнине илтсен, Илйе кӑмӑлсӑр пулса, пӗрре патакпа тӑсса илме пиkенҫ анҫах ҫак каҫ сылӑха кӗме йураманнине астурӗ:ӗ

—Тӑр ҫӗр ҫӑташшӗ! Мӗн выртатӑн ҫун илли... Ҫут хӑвӑртрах тур умне ҫурта... Тӗнҫе кӗҫӗр пӗтмелле.

Арӑмӗ йапӑр—йапӑр сиксе тӑрса ҫурта ҫутсан ӗсӗклесе уласа йаҫӗ:

—Такана та пайан кӑна пуснӑҫҫӗ. Ҫийейместпӗр те ӗнтӗ... Пӗтӗ ҫапла.. Илйе! Илйе тетӗп!—Тен пурте пӗтмӗҫ. Турӑ хӑй суйланисене хӑвармалла тенӗ. Епир колхоса кӗмен вӗтха...

—Ан ула мур! Ҫынсем туйӗҫ. Пӗтҫӗр-ха вӗсем ӳкенеймесӗрех... Иртӗнҫӗҫ ха. Аӑа кӗлту! Ҫын сиҫҫен. Кӗлтусан ҫӑлӑнӑр, терӗ.

Ҫӑнах Микула турӑ умне икӗ ҫын ҫӑркуҫланҫӗҫ.

... Ирхи шурӑм пуҫ кантӑкран карӑнса кӗрсен, урамра ҫын хӗвӗшни палӑрҫӗ, выҫӑхсем те ҫутӑлнине туйса макӑрма пуҫларӗҫ.

— Акӑ тытӑнҫӗ... Ей турӑ, вутлӑ ҫӑмӑрна пирӗн тӗлтен сир,—пуҫне ҫӗклеме хаймасӑр тилмӗрет Илйе матки.

Урамра ҫын сасси илтӗнсе карӗ: ахаҫ ҫухнехи пекех лӑпкӑ, хӑраса мар...

— Марйа инке, кӑлар ӗнӗне! Кӗтӳрен йулатӑн!

— Ей кӗтӳ хӑваласса мансах кайнӑ,—тесе иментерех ҫупса тухрӗ Марйе инке.

Пӗтмен тӗнҫе татах ҫуталса ылттӑн хӗвелне хистесе хӑпартрӗ.

...Иртӗ кун паллӑсӑр, ӗлӗххи пекех... Пӗр милитси ҫех йал витӗр Пеловкӑ йенне кустарса иртсе карӗ. Мӗншӗн тӗнҫе пӗтменнине пӗлме пынӑ ҫынсене Алексейӗвкӑ йумӑҫӗ нумайҫҫен тем ҫин ҫен вӗрентрӗ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, ҫав каҫ тӗнҫене пӗтерме турӑн хатӗрӗсем ҫитмен: вутлӑ ҫӑмӑрне туса хурайман, арханкӗл Михаил та килте пулман...

Халӗ ӗнтӗ пӗҫӗккӗн (пӗлӗтре утарлӑ ӗҫлемеҫҫӗ!) хатӗрсем пухӑнаҫҫӗ. Турӑ вӑй ҫитнӗ таран хуллен йерипен тӗнҫене пӗтерсе пырат. Лайӑх шутласа кӑларсан кунти тӗнҫе авкустӑн пӗрремӗш ҫислинҫе пӗтмелле. Ҫакна каласа парса йумӑҫ сывӑх ҫынсене систерме хушрӗ, шӑмат каҫ тирпейленсе вилӗме кӗтме пехилерӗ.

Ернекун шӑмат каҫ пирӗн пӗлӗш Илйе, раскулаҫит тунӑ Ваҫилҫӑ, тата пӗр икӗ ҫын ирех мунҫа хутса кӗрсе, шур кӗпе тӑхӑнса, лампаткӑ ҫутнӑ турӑшсем умне кӗл тума ларҫӗҫ.

— Етсемӗрсем! Ҫиперӳ *) кӗллине ҫӳклесҫӗҫке... Ыр усалтан вӑл сыхлаканҫӗ,—астутарҫӗ шур кӗпе тӑхӑнса шур сурпан сырӑннӑ карҫӑк.

Пуйан Ваҫилҫӑ ӑна пит ӑшӑ хапӑл турӗ, ҫавӑнтах килӗрен пӗр-икшер пӑт тырӑ парсан (кулак тӗнҫе пӗтнӗ ҫух та услам ҫиҫен манмаст) туса хунӑ йусманне илсе килме пулҫӗ.

Пурпӗрех вилетпӗр тесе етемсем туртӑнса тӑмарӗҫ, килӗрен виҫшер пӑт пухса паҫӗҫ, ҫинҫен тата пӑтӑлӑх пӗрер пӑт кӗрпе илсе килҫӗҫ.

— Тутарсен туррине асӑнсан та йураӗ. Турӑсенҫен тахшӗ тӗрӗс-ха. Кӗлтунин сийенӗ пулмӗ,—хушрӗ ҫӗнӗ Ӳселенҫе тутар хушшинҫе пурӑннӑ Матрӗне инке.—Анҫах вӗсен йӑлипе ӗне пусмалла пулат ӗнтӗ...

Ене тесен пуйан Ваҫилҫӑ:—ӗнелӗ ҫын ере пирӗн,—текелесе темшӗн вӑраххӑн Илйе ҫине пӑхрӗ. Ыттисен куҫӗсем те тем кӗтнӗ пек ун йенне тӗрӗнҫӗҫ.

— Аӑа ӗнене те хамах илсе килетӗп. Пӗтнӗ, пӗтнӗ, пӗттӗр тесе хыпаланса тухса карӗ Типери Илйи.

Ку тухса кайсан пуйан Ваҫилҫӑпа суккӑр йумӑҫ никам сисмен ҫух куҫ хӗссе илҫӗҫ, темле паллӑсемпе калаҫрӗҫ те, ҫаплӑ кӗлӗ пуҫласа йаҫӗҫ.

— Ей ҫӳлти аттемӗр, санӑн йату хисеплнтӗр, —мӑн сасӑпа пуҫласа йаҫӗ пуйан Ваҫилҫӑ.

— Ҫырлах пӗр аслинҫен кӗҫӗнни. Пӳлӗхҫӗ, амӑшӗ ҫӳлти ырӑ! Тутлӑ ҫӗлхепе, тайлан пуҫпа сана асӑнатпӑр, витӗнетпӗр айван ывӑлаша каҫар, ҫӳк ҫырлах,—хул хушшине ҫӗлӗк тытса тутлӑн тӑсрӗ шурӑ карҫӑк.

— Лҫа илҫа-хи алла,... пӗсмӗлле... Илтрахман,—лакӑртатса карҫӑкпа килӗштерсе ӗнӗрлерӗ Матрӗне инке.

Виҫӗ сасӑ, кала пӗлмен ҫын аллинҫи виҫ хӗлӗхлӗ тумра пек, килӗшӳсӗр ҫанкӑртатса йантратрӗ, хӑйне тӗрлӗ кӗвӗ теме активтерсе, астутарҫӗ ҫуккине, инҫине...

Ансӑртран ҫакӑнта пырса ҫакланнӑ Тимахви пиҫе пайтахҫен итлесе ларсан, сасартӑк ӑйӑхран вӑраннӑ пек пӳлса хуҫӗ:

— Ҫарӑнӑр-ха! Кӗнеке ҫинҫе паллӑсем пулӗҫ тенӗ. Хӗрессем унта... тата тем те пӗр... Пӗртте палӑрмаҫӗ-ҫке... Кӗлтуни харама ан кайтӑр, ҫавна астӑвӑр есир...

— Турӑ елле вӑл... комунис мартӑр... Комуниссем ӑна пурне те сасартӑк тума тӑрӑшаҫҫӗ. Тен кӗҫӗр те турӑн пӗр-пӗр ӗҫ сиксе тухнӑтӑр. Кам пӗлет? Йумӑҫ пӑхса пӑхас тата—терӗ ҫаплӑ йумӑҫ.

Ҫавӑнтах шыв тултарнӑ ҫашкӑ ҫине кӑмрӑк йарса хӑвӑрттӑн ҫавӑрса йаҫӗ.

— Тӗнҫе пӗтмелле пулсан кӑмрӑк ҫӑкӑр тӗлне ҫарӑнтӑр.

---

*) Ҫиперӳ—,Алексеҫейӗвнӑ йалӗ тӗлӗнҫи ӑрӑмлӑ ту. Ӑна ҫӳк ҫӳклеҫҫӗ.

# СУХАЛККĔН

Сухалккĕн пайанхиђен нийепле кампанине те хăйĕн пуçĕпе ăнланса илеймесђĕ. Ну, ăнланасса ăнланађђех пулĕ те, вçуткĕшĕ Иванђук Çитăркки (арман хуçи) пулăшнипе çеç ăнланма пултарађђĕ. « Йемелен Петровђă, ес хамăр çын вĕт, çынсемпе виçеллĕ çеç хурсамђĕ...» йăпăлтатађђĕ ăна Çитăр, урай шăлса йăкалнă мĕлке туни пек ана шăммине ђĕтретсе.

— Хе хе-хе! Тултарха тепрер ђеркке, ку вĕт пирĕн ĕç, хам хуçа,—Сухалккĕнăн ђĕри уçлам çу йевĕрлĕ йăнкăр! ирĕлеђђĕ. Кампанисем те çу сĕрмен урапасем пек çухăрса, Çитăрккана сĕртĕнмесĕрех иртсе кайађђĕç.

Пайан вуçех унăн ĕçĕ апла пулмарĕ.Те Йемелене матки çуллă пăтă çитерсе ăс кĕртнĕ, те Иемелен хăйне хăй пĕр кушел телей тупнă. Тупнах пуђ, ахаллĕн Сухалккĕн çав терийех савăнман пулĕђђĕ.

— Хе-хе-хе, неушлĕ утă çине каймалла, так снађђĕт çава, кĕрепле, пуртă, коççилккă, урапа хатĕрлемелле. Хатĕрлес пулаť, хе-хе-хе!—Кулса илђĕ Сухалккĕн райĕçтăвккомран виçĕ ерне малтан йанă инструксине сехет çурăра вуласа тухнă хыççăн.

— Ей, Христун Митри, халăха пухха хăвала, пысăк кампани те!—çухăрђĕ урампа иртсе пыракан йалисполниттĕлне.

— Ара хăваламалла пулсан, хăвалас!

Сухалккĕн хăйне-хăй кампанине ăнланма пултарнă пуçĕпе çав тери савăнăçлăн, аçа кушак пек, тутине çулласа халăх пўрђĕ йеннелле утрĕ. Халăх, вăл пынине курсанах çăккăр таткипе астарнă сурăхсем пек пĕр çĕрелле пуçтарăнђĕ.

— Ну, хресђен-йулташсем, пуху уçар штолĕ,—сĕрлерĕ Сухалккĕн, çурĕмĕнђен сăпса сăхнă пек сĕтел хушшинерех хĕсĕнсе.

— Ара уçас, уçас..

Пуху уçăлђĕ. Йемелен хуран кукли йевĕрлĕ сăмсине калле-малле шĕвĕр пўрнипе шăйăрнă хыççăн

— Йулташсем, есир пĕлеттĕр... утă çулас кампанине, вот снађђĕт çавна хатĕрленмелле... комиççи суйлас пулаť. Комиççин çавасене тĕрĕслемелле, вĕт тата икĕ ернерен утă çине каймалла...

— Лайăх калаť Сухалккĕн, виçĕ ернесĕр каймалла пулмасť-ха,—куçĕсене тилĕ кăвакал çине пăхнă пек ђейен пăхса, Çитăрккан кумĕ алăк пенђен çухăрђĕ.

— Ан лăпăртат, епĕр тавнах хатĕрленнĕ!

— Ыран утă патне кайатпăр уш...

— Çывăрса ĕçлеттĕр!..

— Ехе, есир хирĕç, мĕншĕн есир епĕ калиђенех хатĕрленнĕ, сакип тăватăр! Йемеленĕн сăмси тăрри хĕрлĕ ђер нилпа сапнă пек хĕрелђĕ. Унтан куçĕсене ђетвĕрт кĕленђине ширанă йевĕрлĕ вылђатса:

— Комиççи сўтсе йавмасăр, утă патне каймастăр ни ши-шă!—мĕн пур вăйĕпе çухăрђĕ.

— Сана кĕтсе пулмасť!..

— Ыран кайатпăр ута.

— Çулмалла сана советран, Çитăрккашăн ĕçе пăсса пыран, поткулађнĕк!.

— Ей, ей, ан кайăр, пăккшау сире саккун урлă утă патне кайма,—çав тери кавапинђен хыпкăçпа хĕснĕ пек авкаланса çухăрђĕ Сухалккĕн хресђенсене. Лешĕсем пурĕ-пĕррех йатлаçа килĕсене салан ђĕç.

Улăха утă çулма пуханнă халăх вĕлле хурђĕ пек сĕрлет Пĕри çурла пек кукăрăлс çавине тўрлетет, тепри хăйраť, виççĕмĕш çулаť.

Хăвату йенђен Сăр улăхнелле çавра çил пек тусан вĕçтерсе, куçĕсене йытта хирĕç тăнă кушак пек хайарлатса, Сухалккĕн вĕçтерсе те çитрĕ.

— Конттăрсем, йалсоветĕнђен урлă ма утă çулма килтĕр, йытă ан çул, инструкси килмен вĕт,—ђăмăрларĕ йуман муклашки пек ђышкине Михалкка сăмси айĕнђе.

— Сана кĕтсе пирĕн хăçан пулаť,—ответлерĕ çава тўрлетсе лараканни.

— Ехе, конттăр, инструксисăрах ăçтан тўрлетен, мошет çавуна шурă ђулпа хăйрамалла.

Хĕртнĕ çем хĕртнĕ пăшатан пек хĕрђĕ Сухалккĕн. Ниçта кайса керейменнипе урапа панђи Пĕсехене:

— Ай, ай, çавана ма авринђен шаккан, комиççи пăхса тухмасăрах кам хушнă сана,—ђут хăлхађикки памарĕ.

— Ара савăлĕ пушанђĕ, çирĕплетеп-ха,—пуçне çĕклетмесĕрех ответлерĕ Иванук, хăрах куçне алтăр пек ђарнă Сухалккĕна.

—Конешнă çирĕплетес пулаť, авă кĕреплў аврине те пĕр вунă-вунпилĕк пăта çапаспулађђĕ!

— Çирĕпçке вăл, çĕнĕ—урапа çинђе ларакан пĕђĕк Петук тавăрђĕ кăна.

— Ай-ай есĕ, шĕшлĕк, çавна пĕлетĕн—и?-Петук патне куçне ђарса ђупса пыраканскер, тевĕшрен такăнса симĕс курăк çине йăванса кайрĕ.

... Йăванса кайрĕ те, йăванса кайни шĕшлĕ вĕçĕ пушшĕ те вырăнлă пулмарĕ. Вырăнлă пулнă пусан курăк çине мар, йалсоветĕнђен йăванса каймаллађђĕ. Йăванатех пуђ. Йалçыннисем сиснĕ мĕн Сухалккĕн мĕншĕн çавăн пек хăтланнине. Кулак хушнипе хăтланнă пулнă. Йăвантармаллах çав, „утиђ ăшнех йăвантармалла.

Кашлинке.

---

Таçта ђарăннă пулĕђђĕ кăмрăк—алăкран хашкаса хыпаланса кĕрекен Илйе ђăрмантарман пулсан.

— Иван Ваçилђă! Милитсисем килнĕ... Сана шыраççĕ,—тесе хăратса пăрахрĕ вăл.

Кăна илтсен пуйан Ваçилђă тĕнђе пĕтессине манса, темĕскер йунаса илђĕ те, çĕлĕкне пусса лартса урама тухса карĕ; йумăç та: пўрте питĕрсе хăварманђĕ-ха, тесе çын сассинђен шурĕ; карђăк та: мана та çухатрĕç пулĕ,—тесе йусманне сĕтел çине хăварсах килне тухса утрĕ.

Типери Илйипе Тимахви пиђђе пĕр пĕрин çине вăраххăн пăхса илђĕ те, иккĕшĕ те пĕр ырă мар йапалана пĕлнипе туйса, малтан сăмах тапратма хăйаймарĕç.

— Кунта ĕç ђистах мар пулмалла. Тĕнђен вĕт асăнђе те çук пĕтесси Мĕнле пек сан шухăшпа?

— Мĕнле пек? Сисрĕмĕр ĕнтĕ... Çырăнатăп, тупăта, ыранах колхоса. Ех, ухмах ĕне илсе килме пултăм вĕт. Ех, хĕнеме мана ухмаха!

... Хĕвел тухса йури тăрăхласа кулнă пек питне сарђĕ, çын аташнинђен вăтаннă пек тĕлĕнсе Алексейăвкă йалне ђылайђен сăнарĕ.

... Акă шăхăса утрĕ Типери Илйи, акă тухрĕ ăна хирĕç Çĕрки Тимахви—иккĕшĕ те темле хут тытса колхос правлени йенне сулăнђĕç; пуйан Ваçилђă çурђĕ патне çитсен кантăкран карăнса пăхрĕç: те никам çукран, тем çинђен мăкăртатрĕç те, малалла утарђĕç.

**Елли Йех.**

## Малалли уйăхсенҫе те „Капкăн“ шурналсăр пурăнар мар!




**ХАКĔ УНĂН ХАКЛĂ МАР:** ҫулталăка 1 т. те 20 пус, ҫур ҫуллăха 60 пус, 3 уйăха 30 пус.


# КОНККУРС УҪАТПĂР

„КОЛХОҪНĔК“ Самарти ҫăвашла хаҫат Пурне те, пурне те, пурне те!

иккĕмĕш ҫул тухса тăрат. Уйăхра 12 номĕр тухат. Хаҫат колхос йухăмĕн ҫерстлĕ ыйтăвĕсене, ку ĕҫри ҫитĕнӳсемпе ҫитменлĕхсене, йалхуҫалăхне сотсиалисăмла ҫĕнетесси ҫинҫен, т. ыт. ыйтусене тĕплĕн ҫутатса тăрат.

**„Колхоҫнĕк“ ҫырăнса илме, тата ăна ҫăваш ĕҫхалăхĕ хушшинҫе ытларах сарма тăрăшăр.**

ХАҪАТА САРАКАНСЕНЕ РЕТАКСИ ПРЕМИ ПАРАТ.

**Премисем ҫаксем пулаҫҫĕ:**

1) Хаҫата ҫулталăкĕпех илме 100 потписҫĕк тупакана—50 тенкĕ укҫа.
2) Хаҫата ҫулталăкĕпех илме 50 потписҫĕк тупакана—1 мăшăр поттинккă.
3) Хаҫата ҫулталăкĕпех илме 25 потписҫĕк тупакана—1 мăшăр калуш.
4) Хаҫата ҫур ҫултан кайа мар илсе тăма 100 потписҫĕк тупакана—1 мăшăр поттинккă.
5) Хаҫата ҫур ҫултан кайа мар илсе тăма 50 потписҫĕк тупакана—1 мăшăр калуш.
6) Хаҫата ҫур ҫултан кайа мар илсе тăма 25 потписҫĕк тупакана 1 екҫемпҫар „Колхоҫнĕк“ хаҫата ҫулталăк хушши парса тăратпăр.
7) Октапĕр уйăхĕнҫен пуҫласа ҫĕнĕ ҫулҫен илме 50 потписҫĕк тупакансене те 1 екҫемпҫар „Колхоҫнĕк“ хаҫата ҫулталăк хушши парса тăратпăр.
8) Хаҫата сарасшăн уйрăм ытла нумай ĕҫлекен йулташсен сăнĕсене хаҫатҫине ҫапатпăр.

**Хаҫата сарма тытăнăр, преми илме васкăр!!!**

**Премине пама ҫаранса тăмастпăр, хаҫат мĕн ҫухлĕ сарнине пĕлтерекен ĕнентерӳ хутне ретаксине тăратсанах паратпăр.**

**Хаҫат хакĕ:** 1 уйăха—20 пус, 3 уйăха—60 пус, 6 уйăха—1 т. 20 пус, ҫулталăка—2 т. 40 пус,
Потпискă укҫине пуштă акĕнҫĕ урлă Самара ҫак атрĕспа памалла: **г. Самара, Краевому Газетвому Бюро.**

**Ретакси атрĕсĕ: Самара, Ленинградская 36—38.**


Ответлă ретактăр **А. Ваҫҫилйĕв.**


Упол. Чувашглавлита № 737. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1064. Тираж 7.700 экз.

# Аптрамалла... тытмалла

